

# «Шарлак айне – шапариччен!»

**(Петĕр Хусанкайăн «Сергей Есенин патĕнче» сăввин вăрттăн тупсăмĕ)**

1968 çулта Петĕр Хусанкай "Сергей Есенин патĕнче" сăввине вĕçлет («Çу уйăхĕ», "Мускав" тесе палăртнă вĕçĕнче). Ултă томпа тухнă çырнисен пуххинче ăна поэмăсенчен тăракан виççĕмĕш тома кĕртнĕ (Шупашкар, 2002). "Вырăссен чаплă сăвăçи Сергей Есенин Петĕр Хусанкай пултарулăхне пысăк витĕм кўнĕ, – тет В.П. Станьял ăнлантарура. – Хăйĕн юлашки поэмине чăваш ăсти Мускавра сыватăшра выртнă кунсенче хайланă. Поэма "Суйласа илнисен" 2-мĕш томĕнче (1970) тата "Мехел" кĕнекере пичетленнĕ".

Калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен хайлава поэма теме çук. Шалти пĕлтерĕшĕ, тупсăмĕ вара çапла калама май парать. Çиелтен пăхма – сăвă питĕ ансат. Ятне тунă сăнарлăх, "Эп поэт вĕт-ха" тесе хăйне палăртнине кунта тупаймăн. Питĕ ансат. Кăмăлĕ тĕлĕшĕнчен те сăвă çинчен çавнах каламалла. Тăрăлнă шухăш-кăмăл. Турă умне кĕлле тăнă çын кăмăлĕ.

Ока шывне укалатса
Хĕвел анас патне пыратчĕ,
Хăй мĕлкине юпалатса
Шыв урлă вăл тăсса яратчĕ.

Тўлекчĕ. Çукчĕ тарăху.
Шыв юхăмĕ те паллă марччĕ.
Шап-шурă çăмăл пăрахут
Мана антарчĕ те хăварчĕ.

Сăвă пуçламăшĕнчи ўкерчĕк – символлă, философиллĕ. Ока шывĕ Есенин поэзине сăнарлать (шыв тата поэзи). Есенин сăввисем шыв пекюхаççĕ, юрланаççĕ. Поэт хăй те, вăл çырнисем те, çут çанталăк пулăмĕ пек – пĕр пĕтĕмлĕхре... Ока шывне укалатакан хĕвелĕн символла пĕлтерĕшĕ пирки тĕрлĕрен шухăшлама пулать. (Шухăшламалла та: çавăнпа ĕнтĕ вăл символ.) "Сар ывăл", – тет Хусанкай Есенин çинчен:

Сыхланнӑ улӑм витнӗ пӳрчӗ.
Унта кӗртмеҫҫӗ. Кантӑкран
Путмар та пӗр сӗтел куҫ курчӗ,
Пӗр лампа, тӑрӑх сак, пукан.

Ыттисенчен ытла пӑхтарчӗ
Пӳртри сӳс кӗнчели мана:
Сар ывӑл ҫырнӑ чух арлатчӗ
Пуль савнӑ амӑш пӗр кана.

Лель пек, хӗвел ачи пек курать ылтӑн ҫӳҫлӗ Есенина Хусанкай. Кӗнчеле арлакан амӑшӗ вара ку ӳкерчӗкре пурнӑҫ ҫулне, ҫиппине сӑнарлать. Анакан хӗвел хӑй мӗлкине шыв урлӑ юпалатса тӑсса янин пӗлтерӗшне те тӗрлӗрен вулама пулать. Анакан хӗвел индустри ҫитичченхи, яла тимӗр сӑнӗ ҫапичченхи ял юрӑҫисемпе ҫыхӑнать. "Я – последний поэт деревни", – тет Есенин. "Последний Лель" тесе ят панӑ Станислав Куняев Есенин таврашӗнчи поэтсен проза пуххине (Мускав, 1989). Николай Клюева, Пимен Карпова, Сергей Клычкова, Алексей Ганина "халӑх тӑшманӗ" тесе тӗп тунӑ. Юлашки 20-30 ҫул хушшинче тӗпчевҫӗсенчен ытларахӑшӗ "Есенин хӑй ҫине алӑ хуман – ӑна вырӑса, вырӑслӑха хирӗҫ ҫынсем вӗлернӗ" тесе палӑртрӗҫ. Ку шухӑш еккипе кайсан мӗлкепе юпа та метафизикӑллӑ пӗлтерӗшлӗ ("Хӑй мӗлкине юпалатса // Шыв урлӑ вӑл тӑсса яратчӗ"). Хӗвел мӗлки - хӗвел ачисен – Лельсен – мӗлки. "Юпалатса" сӑмах та ӑнсӑртран мар. Юпа – палӑк. Чӑвашла пӗлтерӗш те пур ку сӑмахра. Хӑйӗн авалхи тӗнӗпе пурӑннӑ чух чӑваш вилнисене асӑнса юпа лартнӑ. Хӗвел хӑйӗн ачисене асӑнса юпа лартать теме пулать. "Урлӑ" сӑмах та пӗлтерӗшлӗ. Шыв юххи – пурнӑҫ юххи. Хӗвел ачисем вара шыв юххипе ишмен – урлӑ ишнӗ. Вырӑс литературине халалланӑ "Перпендикуляр" кӗнекен (Мускав, 2008) тӗп шухӑш-туртӑмне авторӗ Михаил Веллер ҫапла палӑртать: "Если тебе дадут линованную бумагу – пиши поперек!" Есенин та, ӑна ҫывӑх вырӑс ҫыравҫисем те – перпендикулярсем.

"Тӳлекчӗ. Ҫукчӗ тарӑху. // Шыв юхӑмӗ те паллӑ марччӗ". – Ку йӗркесем те, ыттисем пекех, хушма пӗлтерӗшлӗ. "Хулиган" тет Есенин хӑй пирки. Тарӑхӑвӗ ун ӑҫтан килнине "Хулиган" (1929) сӑвӑран ӑнланатпӑр:

Бродит черная жуть по холмам,
Злобу вора струит в наш сад.
Только сам я разбойник и хам
И по крови степной конокрад.

Кто видал, как в ночи кипит
Кипяченных черемух рать?
Мне бы в ночь в голубой степи
Где-нибудь с кистенем стоять.

Ах, увял головы моей куст,
Засосал меня песенный плен.
Осужден я на каторге чувств
Вертеть жернова поэм.

Но не бойся, безумный ветер,
Плюй спокойно листвой по лугам.
Не сотрет меня кличка "поэт",
Я и в песнях, как ты, хулиган.

Петĕр Хусанкай Константиново ялĕнче 1968 çулта пулнă. Атнер Петрович Хусанкай шучĕпе, "Сергей Есенин патĕнче" сăвва çул çӳревren таврăнсан çырнă. 1919 çулта мар. "Пăнтăх тапхăрĕ" тетпĕр вăл вăхăта: "Шыв юхăмĕ те паллă марччĕ".

Петĕр Хусанкай асăнакан пăрахут та ("Шап-шурă çăмăл пăрахут") – ахаль пăрахут мар: вăл Есенин карапĕсемпе антитеза йĕркипе хутшăнура. Вырăс поэчĕшĕн Çĕр те, Раççей те – карап. "Письмо к женщине" (1924) сăвăран:

Земля – корабль!
Но кто-то вдруг
За новой жизнью, новой славой
В прямую гущу бурь и вьюг
Ее направил величаво.

Ну кто ж из нас на палубе большой
Не падал, не блевал и не ругался?
Их мало, с опытной душой,
Кто крепким в качке оставался.

Тогда и я
Под дикий шум,
Но зрело знающий работу,
Спустился в корабельный трюм,
Чтоб не смотреть людскую рвоту.

Тот трюм был –
Русским кабаком.
И я склонился над стаканом,
Чтоб, не страдая ни о ком,
Себя сгубить
В угаре пьяном.

Пăрахутран анса юлсан сăрт çине хăпарни – символла пĕлтерĕшлĕ. "Çара та тăмлă сăрт çине хăпартăм". Çара та тăмлă сăрт Голгофăпа, Христоса пăталанă

вырăнпа, танлашать. "Вырăс Христосĕ" тенине вулама пулать Есенин çинчен. "Ялĕ çÿлерех-тĕр" тени хыççăн нумай пăнчă лартни ирĕксĕрех пире Голгофа-Христос-Есенин шухăш йĕрĕ çине сулăнтарать. Ялăн асап сăрчĕ татах та çÿлерех. Чиркÿ тăрри хĕрессĕр пулни çинчен асăннă хыççăн ĕнтĕ Хусанкай урăхла перспектива та пуррине систерет:

Пăхатăп çаврăнса калла:
Çырма леш енĕн тавра курăм
Каять таçта аяккалла...
Çĕр-шывĕн анлăхне эп туйрăм.

Çĕр-шывĕн, халăхĕн, чĕлхин
Чăтăмлăхне сиссе илетĕп.
Грекран Варяг таран халь тин
Çул хывнă пек эп тĕлленетĕп...

Хусанкая çупăрласа илнĕ кăмăла Есенин чĕлхине куçарас пулсан "Гой ты, Русь, моя родная" темелле ахăртнех. Ку сăввăн иккĕмĕш йĕрки: "Хаты – в ризах образа". Вăл ирĕксĕрех Хусанкай куракан Есенин ялне символла пĕлтерĕш хушать, вара "Урамалла виç чÿрече, // Ялти нумай-нумай пÿрт пек" тени пире "пÿрт-турăш" шухăш йĕрĕ çине ÿкерет. Вара чÿрече виççĕ пулни те Ашшĕ, Ывăлĕ тата Таса Сывлăш пирки шухăшлаттарать.

Петĕр Хусанкай çул çÿревĕ те таса, сăваплă вырăна кайнипе – паломничествăпа – танлашать. Турăш умĕнче тăнă пек тăрать чăваш поэчĕ Есенин кун çути курнă çурт умĕнче. Капашлă, аслă тĕнче шайĕнчи (çакăнта ĕнтĕ шăпах сăвăри эпика сывлăшĕ) пĕтĕмлетÿсем тăвать:

Çак пĕчĕкçĕ пÿртре çуралнă
Пит йышлă пысăк шухăша
Тĕнчешĕн, çынлăхшăн суранлă
Чĕри юн панă тăтăшах.

Çапла: тĕнче шухăшĕпе
Кунта вăл пурăнса ĕçленĕ.
Пит çамрăк, тин шăтайнă пек –
Çĕре кĕме те хатĕрленнĕ.

Вилĕм пирки асăнсан поэт сăмаха хăй çине куçарать (çапла майпа çывхарса килекен вилĕм сас парать теме пулать – элчелĕ çитессе ун тепĕр икĕ çул кăна).

Ун чĕрĕ кунĕ-çулĕнчен
Икĕ хут эп аслăрах тăратăп.

Есенин вăтăр çул пурăннă çĕр çинче (1895–1925), Хусанкай утмăл виçĕ çул (1907–1970). "Сергей Есенин патĕнче" сăвă тăват йĕркеллĕ вăтăр строфаран тăрать. Вăтăр строфаран тăракан чечек çыххи теме пулать ку сăвва. Есенина чунтан хисеплесе асăнни, пĕтĕм чунтан тав туни. "Хисеплеме пĕлмен халăх", –

тет стражник, вырăс çынни, Ефрем Еллиевăн "Пирĕн телей çавнашкал" (1935) драминче. "Сергей Есенин патĕнче" – чăваш хисеплеме пĕлекен халăх пулнине çирĕплетет:

Нумайăшне курса пулмарĕ,
Сана тĕл пулманни – инкек,
Мĕн-ма тесессĕн ял тымарĕ
Пулсаччĕ пирĕн пит пĕр пек.

Сăмах тупăнатчех, курсассăн,
Вун улттăри ял ачине
Сăввун шарлакĕпе эс сапрăн
Ӳкереслех çак çĕр çине!

Тăраттăм та каллех пыраттăм
Шарлак айне – шапариччен!
Пĕли-пĕлми алпа çыраттăм
Сан майлă хам та – анриччен!

Малтан çапла пулать те пулĕ:
Такам çатăрласа тытать:
Ача мĕн вулĕ – çавă юлĕ
Асра, чунра та кăмăлта.

Пурне те халь аса илсессĕн –
Чĕрисенчен чи малтанхи
Эс тиврĕн чĕрене, Есенин,
Сана тавссийĕм. Яланхи.

Хайне витĕм кӳнĕ çынна çавăн пек тав туни сайра. Чăннипе ăçтан илнине, мĕнпе хавхаланнине пытарас йăла пур çыравçăсен хушшинче. Андре Жид "Литературăри витĕм çинчен" çырнă. Нобель лауреачĕ "Сергей Есенин патĕнче" сăвва вуланă тăк Петĕр Хусанкая чăнласах аслă çын тесе хаклатчех. Урăх çын витĕмне йышăнма пултарни – аслă çын палли: "Шарлак айне – шапариччен!"

**Юрий ЯКОВЛЕВ,**
**тĕпчевçĕ**